# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

44 (7469) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи майăн (çу) 30-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Июнĕн 1-мĕшĕ – Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе сире чĕререн саламлатăп!

Июнĕн 1-мĕшне чăннипех те Чăваш Республикипе Раççей малашлăхĕшĕн хăйсене ответлă тесе шутлакансен уявĕ тесе калама пулать. Ахаль каламаççĕ ĕнтĕ çитĕнекен ăрăва тĕрĕс воспитани панинчен пĕтĕм халăхăн пурнăç шайĕ мĕнле пуласси килет тесе. Ачасен сывлăхĕпе телейĕ, çемьесенчи юратупа килĕшӳ – çак енсем яланах çынсене вĕсен пархатарлă ĕçĕсенче пĕрлештерсе тăнă.

Ĕмĕрхи хаклăх приоритечĕсем хальхи Чăваш Ен аталанăвĕн тĕп тытăмĕ пулса тăраççĕ. Ача амăшĕсене тата ачасене хӳтĕлесси республика аталанăвĕн тĕп енĕсенчен пĕри пулса тăрать. Çамрăксем сывă ӳсчĕр, çирĕп сывлăхлă пулччăр тесе республикăра хальхи физкультурăпа спорт комплексĕсем ĕçе кĕреççĕ, шкулсемпе тĕслĕх библиотекăсем уçăлаççĕ. 2007–2010 çулсем валли хатĕрленĕ «Чăваш Ен ачисем» тĕллевлĕ республика программи пурнăçа кĕрсе пырать. Кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчен тытăнса кăна республикăра пурăнакан татах 50 пин ача ача пособийĕ илме тытăнать.

Чăваш Республикинче 2007 çула Ача çулталăкĕ тесе палăртрăмăр. Хаклă ентешсем, эсир пурте пирĕн ачасем çĕршыва юрăхлă çынсем пулса ӳсчĕр тесе çине тăрасса шанатăп.

«Ача-пăча пӳрт тултарать»,– тенĕ ваттисем. Пирĕн кил-çуртра ачасен хавас сасси ан шăплантăр. Сире пурне те çирĕп сывлăх, оптимизм, ăнăçу тата телей сунатăп!

**Н. ФЕДОРОВ, Чăваш Республикин Президенчĕ.**

---

Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») фракци членĕ **Павел Семенов** та саламлать, кашни ача çемье ăшшипе аслисен тимлĕхне туйса тăтăр, çĕршыва усăллă çын пулса ӳстĕр тесе сĕнет, ырлăх-сывлăх сунать.

**ХАКЛĂ АЧАСЕМ ТАТА АШШĔ-АМĂШĔСЕМ!**

Сире çывхарса килекен Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Ачалăх кашнин пурнăçĕнче асра юлать. Çамрăк граждансен малашлăхĕ епле пуласси ачалăх мĕнле иртнипе тачă çыхăннă. Çавăнпа та кашни çын пурнăçра хăйĕн вырăнне туптăр тесен, пирĕн, çитĕннисен, вĕсен ачалăхĕ телейлĕ пултăр тесе тăрăшмалла. Ашшĕ-амăшĕсем, воспитательсем, вĕрентекенсем хăйсен тивĕçĕсене чун-чĕререн пурнăçласан, район малашлăхĕ те, çĕршыв пуласлăхĕ те шанчăклă та çирĕп алăсенче пулĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ЧР Президенчĕ 2007 çула Ача çулталăкĕ тесе ят пачĕ. ЧР, РФ Правительствисем телейлĕ ачалăхшăн хăйсенчен килнине йăлтах тăваççĕ. Çакна вĕсем ачаллă çемьесене пулăшас тĕллевпе кăçал çине-çинех тунă утăмсем те çирĕплетсе параççĕ.

Ачасем – пирĕн пурнăç чечекĕсем, пурнăç илемĕ. Чечеке вăхăтра шăварсан, вăхăтра йĕркеллĕ пăхсан çеç çирĕп те илĕртӳллĕ пулать. Çавăнпа та хамăр ачасем савăнăç кӳччĕр, ватлăхра пирĕн хӳтлĕх пулччăр тесен, вĕсем пĕчĕк чух тимлĕ пуласчĕ, тĕрĕс воспитани парасчĕ. Ашшĕ-амăшĕсен хăйсен тивĕçне чун-чĕререн пурнăçласчĕ. Хамăр ывăл-хĕрсен ăс-тăн, ӳт-пӳ, кăмăл-сипет аталанăвĕшĕн кулленех тăрăшасчĕ. Вĕсене пурнăçри йывăрлăхсемпе кĕрешме, çĕнтерме вĕрентесчĕ. Хамăрăн ачасемшĕн ырă тĕслĕх пуласчĕ, вĕсене ыттисене ырă тума хăнăхтарасчĕ. Тăван кил ачамăрсемшĕн савăнăç кӳрекен, чун туртакан вырăн пултăр тесе, хамăртан килнине йăлт тăвасчĕ. Ашшĕ-амăшĕн юратăвне туйса ӳсекен ача хăйне çирĕп те телейлĕ туять.

Пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатăп. Çемйĕрсенче ăнланулăхпа тату пурнăç хуçалантăр, юратупа ăшă кăмăл кашнин валли çиттĕр. Ачăрсемпе, вĕсен телейĕпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

## Республикăра

## Чăваш Республикин Президенчĕн хушăвĕ

1. Чăваш литературин классикĕн К.В. Ивановăн “Нарспи” поэмин пĕтĕмĕшле наци пĕлтерĕшне шута илсе, 2008 çулта ăна пичетлесе кăларнăранпа 100 çул çитнине халалланă мероприятисем ирттерес.

2. Чăваш Республикин Кабинечĕн К.В. Ивановăн “Нарспи” поэми пичетленсе тухнăранпа 100 çул çитнине хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕ туса хумалла тата мероприятисен планне çирĕплетмелле.

3. Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене К.В. Ивановăн “Нарспи” поэмине пичетлесе кăларнăранпа 100 çул çитнине халалланă мероприятисене ирттерес ĕçе активлă хутшăнма сĕнес.

4. Асăннă хушу ăна алă пуснă кунран кăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2007, çу, 25, 44 №.

## Вырьăх-чĕрлĕх пăхакансен районти конкурсĕнчен

# Çĕннине алла илмесĕр аталану ик телейлĕ

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В. Путин палăртнă “Агропромышленноç комплексне аталантарасси” наци проекчĕ юлашки пĕр-икĕ çулта ял хуçалăх предприятийĕсене, ялта пурăнакансене çĕнĕ аталану вăйĕ пачĕ, хăйсем ку таранччен пурнăçланă ĕçсем çине вĕсене çĕнĕлле пăхма хистерĕ, кашнин умнех çĕнĕ тĕллевсем лартса çакна валли çĕнĕ ĕç мелĕсем алла илме, производствăна çĕнĕ технологисем кĕртме хавхалантарчĕ. Мĕн тетĕр эсир? Пăр тапранчĕ, продуктивлăх ӳсрĕ. Анчах кун йĕркинче темĕнле проект-программа пулсан та, конкретлă ĕçлекен ăсталăхĕ малти вырăнта тăрать. Вăл çапла пулнă, пур, пулĕ те. Çакна асра тытса тата обществăлла вырьăх-чĕрлĕх патĕнче чунне парса ĕçлекенсен малтуртăмлăхне аталану çулĕ çинче пурнăçпа тан илсе пырас тĕллевпе район администрацийĕ çулленех пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче машинăпа ĕне сăвакан операторсемпе ĕнесене вăхăтра пĕтĕлентерессишĕн яваплă пулса тăракан техник-осеменаторсен конкурсне ирттерет. Кăçал та çак ырă пуçару кун йĕркинчен тухса ӳкмерĕ.



**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов конкурса хутшăнакансене саламласа ырă стартсем суннă вăхăт.**

**Çу уйăхĕн 24-мĕшĕ. Юрий Николаевич Шишокин ертсе пыракан “Оринино” ял хуçалăх производство кооперативĕн Патаккассинчи сĕт комплексĕ. Кунти 36 çынран тăракан коллектива 4-мĕш çул ĕнтĕ Раиса Ананьевна Блинова ертсе пырать. 205 сумалли ĕнеллĕ коллектив куллен вăтамран 2,5 тонна сĕт парать. Апат пур, производство линийĕсем пĕр кăлтăксăр ĕçлеççĕ, ĕçлекенсем те хăйсен тивĕçне вăхăтра пурнăçланипе палăраççĕ. Çак звеносен килĕшĕвĕ – мал туртăмлă ĕç никĕсĕ. Кăçал çулталăк пуçланнăранпа тăвата уйăхра Орининсем пĕтĕмпе 331,5 тонна сĕт (пĕлтĕрхин 114,8 проценчĕ), 80,5 тонна (156 процент) ашкакай туса илнĕ. Кăтартусене усă куракан 100 гектар çĕр пуçне пăхсан, кунта та Орининсем кайри ретре мар: январь – апрель уйăхĕсенче 179,7 центнер сĕт (пĕлтĕр – 156,4), 43,6 центнер аш-какай (28,0) туса илме пултарнă. Ку вăл районти вăтам кăтартусенчен самай ӳсĕмлĕрех. Çакăнпа пĕрлех мăйракаллă шултра вырьăхсемпе сыснасен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ те ытти нумай хуçалăхсемшĕн тĕслĕх вырăнне: 755 тата 446 грамм.** Çак хуçалăх базинче паян ĕнесене машинăпа сăвакан операторсен тата техник-осеменаторсен çулленхи ырă йăлана кĕнĕ районти конкурсĕ иртмелле.



**“Герой” хуçалăхри Ольга Витальевна Петрова конкурс вăхăтĕнче.**

**(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).**

## Çур аки

# Уй-хирти ĕçсем

Çĕртме уйăхĕ алăкран шакканипе хуçалăхсенче çур аки ĕçĕсем те вĕçленнĕпе пĕрех ĕнтĕ. Çурхи уй-хир ĕçĕсен планĕпе пăхнă акăнмасăр юлнă лаптăксем хура пусăна куçаççĕ. Вĕсене пăхса тăрасси вара умри ĕç. Сводкăра кăтартнисĕр пуçне хуçалăхсем кăçал 168 гектар (70,4 процент) вырьăх кăшманĕ, 11 гектар (18 процент) пахча çимĕç акрĕç-лартрĕç.

Çур аки ĕçĕсем вĕçленнĕ май акни-лартнине тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерессси вăй илет. Майăн 30-мĕшĕ тĕлне тăватă хуçалăхра (“Герой” – 25 га, “Оринино” – 50 га, Ильич яч. хис. хуçалăх – 300 га) çумпа кĕрешсе тырă анисене гербицид сапма пуçланă. “Восток” хуçалăхра чир-чĕрпе тата сăтăрçăсемпе кĕрешсе 140 гектар çинче химилле хӳтĕлев ирттернĕ.

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ÇУР АКИ ĔÇĔСЕМ ЕПЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**
**(çу уйăхĕн 29-мĕшĕ тĕлне)**

**Колонкăсенче: 1. Çуртрисем акнă. 2. Пĕр çул ӳсекен курăксем акнă. 3. Çĕр улми лартнă (процентпа).**

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 100 | 100 | 100 |
| “Волга” | 100 | 77 | 0 |
| “Восток” | 100 | 100 | 100 |
| “Герой” | 100 | 133 | 100 |
| К. Иванов яч. хис. | 54 | 0 | 0 |
| Ильич яч. хис. | 100 | 100 | 100 |
| “Колос” | 53 | – | – |
| Ленин яч. хис. | 100 | 100 | 70 |
| “Лидер” АФ | 65 | 0 | |
| “Моргаушская” | – | 100 | – |
| “Оринино” | 100 | 100 | 100 |
| “Передовик” | 87 | 100 | 32 |
| “Свобода” | 100 | 100 | 84 |
| “Сеятель” | 66 | – | – |
| Суворов яч. хис. | 100 | 100 | – |
| “Рассвет” АФ | 100 | 100 | – |
| “Ударник” | 100 | 79 | 16 |
| Чапаев яч. хис. | 100 | 100 | 20 |
| “Чемеево” | 88 | 0 | 17 |
| Чкалов яч. хис. | 188 | 100 | – |
| ДаАн | – | – | 64 |
| Ял хуçалăх предприятийĕсемпе | 88,4 | 85,7 | 56 |
| КФХсемпе | 104 | – | 118 |
| **Районĕпе** | **89,6** | **85,7** | **60,7** |

## Çырăнтару – 2007

# Районхаçат çырăнакансене парнесем кĕтеççĕ









**Хаклă вулакансем! Çырăнтару тапхăрĕ вĕçлениччен 1 уйăх кăна юлчĕ. “Çĕнтерӳ ялавне” çырăнса илме васкăр!**

**“Çĕнтерӳ ялавне” 6 уйăха çырăнакансем хушшинче лотерея вылявне ирттеретпĕр.**

**Чи телейлисене тĕслĕ телевизор, СВЧ-кăмака, DVD-плеер, утюг, чейник, телефон, миксер, фен тата ытти хаклă та паха парнесем кĕтеççĕ.**

**Иккĕмĕш çур çулта та пĕрле пулар!**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 147 тенкĕ те 42 пус.**

**Районхаçат редакцийĕ.**









## Йĕрке кирлĕ

# Пасарсем хресченсене тата хула çыннисене кирлĕ

Тунти кун ЧР Президенчĕ Николай Федоров эрне пуçламăшĕнче йăлана кĕнĕ йĕркепе Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Николай Федоров Шупашкарти пасарсенчи суту-илĕве мĕнле йĕркеленипе кăмăлсăр пулнине пĕлтернĕ. Иртнĕ шăмат кун республика ертӳçи хулари хăш-пĕр пасарта пулса вĕсенче çивĕч ыйту нумай пулнине курса ĕненнĕ. Вăл, сăмахран, Чăваш Ен тĕп хулинче чăваш çĕрĕ çинче туса илнĕ тата лайăх çимĕç туянма пĕтĕмĕшле май çуккине палăртнă. “Çакă çынсен сывлăхне те пырса тивет”, – тенĕ Николай Федоров. Тĕп пасарта вăл паянхи кун, республика ертӳçи палăртнă тăрăх, тем те пĕр сутакан пасар пулса тăнă, хăйсем туса илнĕ продукцие сутакансем кунта темиçе çын çеç. Анчах та вĕсем питĕ япăх условире ĕçлеççĕ. “Муниципалитет влаçĕн тивĕçĕ – хăйĕн халăхне усăллă тата кирлĕ ял хуçалăх продукцийĕпе тивĕçтерессине йĕркелесси”, – палăртнă Николай Федоров. Хула влаçĕсене çак çивĕч ыйтусене татса пама пĕр эрне уйăрнă. Çавăн пекех Ял хуçалăх тата Экономика министерствисене те çак ыйтусемпе ĕçлеме хушнă.

**ЧР ПА пресс-службы.**

## Акатуй

# Уяв программи пуян

Пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ, районти Акатуй уявĕ июнĕн 10-мĕшĕнче Лантăш вăрманĕн уçланкинче иртет. Унăн программи пуян. 10 сехет çурăра хăнасене кĕтсе илнĕ хыççăн вăрман уçланкинче фольклор ушкăнĕсен композицийĕ пулать. Пĕтĕмĕшле вара уяв 10 сехет те 45 минутра пуçланать, музыкăпа хореографи тата спорт композицийĕ иртет.

11 сехетре уява район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçать. Çурхи уй-хир ĕçĕсен итогĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов пĕтĕмлетет. Ĕçре палăрнисене чыслаççĕ. Унтан уява килнĕ хăнасем сăмах илеççĕ, ĕç династийĕсене чыслаççĕ, ача амăшĕн капиталĕн свидетельствисене параççĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендийĕсене тивĕçнисене палăртаççĕ.

Концерт программи пуян. Программăра пĕрлештернĕ хор юррисем те, художество пултарулăх ушкăнĕсен номерĕсем те.

Ачасемшĕн те уяв асра юлĕ. Акатуйĕнче ачасен коллективĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ, вăйă программи иртет, спорт вăййисем пулаççĕ. Кунпа пĕрлех карусельпе ярăнасси те пурне те килĕшĕ.

Спорт ăмăртăвĕсенчен волейбол, бокс, кире пуканĕ çĕклесси, армспорт, ирĕклĕ майпа кĕрешесси, саньда, турник çинче туртăнасси, канат туртасси тата ыттисем пулаççĕ.

Суту-илӳ предприятийĕсем хăйсен продукцине сĕнеççĕ. Ял тăрăхĕсем тăрăх декоративлă прикладной искусство тата ачасен ĕçĕсем енĕпе выставка-ярмăркă иртет.

16 сехетре уяв вĕçленет. Ун умĕн вара спорт мероприятийĕсен итогĕсене пĕтĕмлетеççĕ, смотр-конкурс итогĕсем тăрăх художество пултарулăх ушкăнĕсене чыслаççĕ.